СУЙЛАВ

# ÇĚНĚ ТАПХĂР

**Валерий СОРОКИН**

«Хыпар»

Выранти хăй тытăмлăх /самоуправлени/ органĕсен суйлавĕ çак кунсенче çĕнĕ тапхăра куçрĕ. Раштавăн 14-мĕшĕнче кандидатсене юлашки кун регистрацилерĕç. Кама регистрациленĕ – вĕсем агитаципе ĕçлеме пултараççĕ.

Пĕлетпĕр ĕнтĕ, вырăнти хăй тытăмлăх пуçлăхĕсене республикăра пĕр районта – Вăрнар районĕнче – çеç суйламаççĕ, депутатсене вара пур çĕрте те /26 район-хулара/ суйлаççĕ. Кандидатсене пĕтĕмпех регистрацилесе пĕтернӗ.

Ĕнер Чăваш Республикин Тĕп суйлав комиссийĕнче пресс-конференци иртрĕ. ТСК председателĕ Л.Линик тата председателĕн çумĕ М.Киселев регистрациленнĕ кандидатсен списокĕсемпе паллаштарчĕç, суйлав ĕçĕнчи паянхи лару-тăрава, малашнехи йĕркене ăнлантарса пачĕç.

– Вырăнти хăй тытăмлăх пуçлăхĕсем пулма 143 çынна кандидата тăратнăччĕ. Анчах вĕсенчен 15-шĕ тĕрлĕ сăлтава пула списокран тухса ӳкрĕ, – палăртрĕ Людмила Ниловна. – Çапла вара çак должноçа йышăнас текенсен шутĕнче паян регистрациленнĕ 128 кандидат. Чи нумаййи Улатăр хулинче – 9 çын. Хĕрлĕ Чутай районĕнче – 6. Малтан унта та Улатăр хулинчи пекех 10 çын пулнă. Анчах кунта 4-шне регистрацилемен: вĕсем документсене те тăратман пулнă. Куславкка районĕнче вара пĕтĕмпе те 2 çын çеç. Унтан сахал пулсан суйлав иртнĕ шутланмасть.

Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Вăрмар, Шупашкар районĕсенче – 3-шер, Элĕк, Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Пăрачкав, Етĕрне, Елчĕк районĕсенче, Çĕмĕрле хулинче – 7-шер кандидат. Кашни район-хуларах, Улатăр тата Комсомольски районĕсемсĕр пуçне, халĕ ĕçлекен пуçлăхсем кандидата тăнă. Вĕсем, саккун тăрăх, суйлав вăхăтĕнче отпуск илмессе те пултараççĕ. Анчах, тепĕр енчен, РФ Тĕп суйлав комиссийĕн вĕсене çак вăхăта отпуск илме сĕнекен çырăвĕ те пур. Ăна шута илсен аванччĕ, тавлашусем сахалрах пулĕç», – терĕ Л.Линик.

Малалла Людмила Ниловна район-хула депутачĕсен пухăвĕсене суйланма тăнă кандидатсем çинче чарăнса тăчĕ. Районсенче депутат пулас текенсем сахал пулни – çак суйлавсен уйрăмлăхĕ. Çавна май хăш-пĕр округра суйлав иртеймест хăрушлăх та курăнса кайрĕ, палăртрĕ вăл. Анчах та юлашкинчен ĕç-пуç майлашăннă-мĕн.

Республикипе 579 округ, вĕсенче 1676 кандидат регистрациленĕ – вăтамран 3 çын майлă. Чи нумай кандидат – Шупашкарта, Çĕнĕ Шупашкарта тата Куславкка районĕнче. Вĕсенче кашни вырăнах 5 çынна майлă.

Регистрациленĕ чухне тавлашуллă самантсем пулманпа пĕрех. 35 çынна çапах та регистрацилемен. Тĕп сăлтавĕ – саккунсене вĕçне çитиччен шута илменни. Калăпăр, суйлавçăн датăна хăйĕн лартмалла, теприсем ку тĕлĕшпе йăнăш тунă. Малалла агитаци тапхăрĕ пуçланать, ахăртнех, ун чухне хирĕçӳллĕ самантсем ытларах пулĕç. Çапах çавă та лайăх: кандидатсем пĕр-пĕрин хыççăн хытă йĕрлеççĕ, çавăнпа йĕркене пăсасси те виçерен иртмессе шанса тăратпăр, палăртрĕç ТСК ертӳçисем.

Район-хула пуçлăхĕсен должноçне йышăнма тăнă, регистрациленнĕ кандидатсен списокне çитес номерсенчен пĕринче пичетлĕпĕр.